**Ну, чăва-аш!**

Картишĕнче йыт вĕрет,
Вучахра яшка вĕрет,
Урам тăрăх вашлаттарса
Урлă-пирлĕ çил вĕрет.

Асанне мана паян:
– Чарăн-ха тĕпĕртетме,
Лар та сĕтел хушшине –
Çыр, вула, сăрла, шутла…
Тем тума ăш-чик вĕрет,
Мĕскере-ши пĕлтерет?
Çум çумлам-ха, эс – вĕрен», –
Терĕ те кăштăртатса
Тухса кайрĕ пахчана.

Пĕчĕк пуçăма ватса
Эп ларатăп шутласа:
«Вĕри чунлă чăвашсен
Ура тĕпĕ те вĕрет,
Ал тупанĕ те вĕрет,
Ĕçĕ те сиксем вĕрет.
Ну, чăва-аш, тĕлĕнтере-ет».

*Асамат, С. Ну, чăва-аш! / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 407.*